## Ăс-хакăлпа чун аталанăвĕн çулталăкĕ

# Юрату тумламĕ пулсассăн...

ЧР Президенчĕн Н.В. Федоровăн Указĕпе килĕшӳллĕн 2006 çул – ăс-хакăлпа чун аталанăвĕн çулталăкĕ. Чунлăх ыйтăвне малти вырăна хуни ахальтен мар, мĕншĕн тесен эпир мĕн тăватпăр – йăлтах пирĕн шалти чун-чĕре тĕнчипе çыхăннă, ĕмĕтсем



те унтах çуралаççĕ. Эпир кăмăлтан вăй хурсан, ĕç те ăнать, пултарулăх та çунатне сарать.

Çак кунсенче вара пирĕн республикăра ЧР Президенчĕн Н.В. Федоровăн мăшăрĕ Светлана Юрьевна йĕркелесе ертсе пынипе Мускаври ăс-хакăлпа чун юхăмĕн "Юрату тумламĕ" ушкăнĕ ыр кăмăллăх концерчĕсем лартрĕç. Иртнĕ юн кун вара асăннă ушкăн Светлана Юрьевнăпа пирĕн районта пулчĕ. Район администрацийĕн ЗАГС пайĕн ырă йăла-йĕркесен залĕнче пĕр сехет ытларах пынă концерт пĕр самантрах иртрĕ тейĕн. Ушкăнра юрлакансем юррисене хăйсем çырнă, хăйсем кĕвĕленĕ пĕрремĕш юрăран пуçласах куракансен чун-чĕрине тыткăна илчĕç. Вĕсемпе куракансем хушшинче тӳрех сăмахпа каласа ăнлантараймми ăнланулăх, тăванлăх кĕперĕ хывăнчĕ. Чунлăх, юрату пытаннă юрăсенчи кашни сăмахĕпе нотинче çеç мар, юрăççен кашни хусканăвĕнче те. Хăйсем çак туйăмпа çунса тăраканскерсем, пĕр хăйсем залра çакăн пек ларутăру туса хурса, кашни çын ыттисенчен кĕтекен çак туйăмсене ыттисене памалла текен туйăма чĕртрĕç.

Чăваш Енте кăçалхипе 3-мĕш хут пулакан "Юрату тумламĕ" хăйсем çак ушкăна пуçтарăннине çапла ăнлантарчĕç:

– Чи малтанах эпир пурнăçра сиксе тухнă йывăр проблемăсене татса парас тесе тĕл пулаттăмăр. Каярахпа пирĕн йыш ӳссех пычĕ. Пирĕн хушăра тĕрлĕ професси çыннисем, тĕрлĕ шухăшлă, шанăçлă çынсем. Пыра-киле хамăр хушăра çакăн пек ушкăн йĕркелемелли талантсем пулнине асăрхарăмăр. Çапла çуралчĕ "Юрату тумламĕ" ушкăн.

Вĕсене вара пурне те юрату пĕрлештерсе тăрать: пурнăçа юратни, çынсене юратни, пĕр-пĕрин хутшăнăвĕнче чăтăмлă пулни.Чун ман юрлать, вăл тунсăхлать, шав малаллах вăл вĕçтерет. Анчах та хальлĕ-



хе ăна никам тупма пултарайман.

Чун-чĕрене тыткăнлаççĕ çак сăмахсем. Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен сиккипе чупакан пурнăçра эпир чунлăх пирки мансах çынна кӳрентеретпĕр. Пирĕн кăмăла хуçаççĕ. Кашнине çывăх иккен вăл чунлăх туйăмĕ.

Кĕтмен çĕртен сиксе тухнă инкек, пĕтĕм ĕмĕте салатнă чух, "Юрату тумламĕсем" юрланă пек, эпир, хамăр вăй пĕтсе çитсен, ытти вăйсенчен, сӳлти вăйсенчен пулăшу ыйтса кĕлтăватпăр.

Асăрханă ĕнтĕ эсир: пĕрисем пур-сукшăнах кулянаççĕ. Çумăр çусан та, ах, унччен çумласа ĕлкĕреймерĕм, тесе кулянаççĕ. Чунпа татăлма кирлĕ мар. Хĕвел татах йăл кулать. Тав, пархатарлăх туйăмĕ пулмалла пирĕнте. Теприсем яланах хавас кăмăллă, ĕçĕ те ăнсах пырать вĕсен. Мускаври хăнасем шăрантаракан юрăри пек каласан, çапла пулма пулăшнăшăн тав тума пĕлмелле.

– Пирĕн тĕллев – юрату мĕн иккенне пĕлесси. Кашни çын пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн ăнланса пырать: мĕн вăл çĕршыва юратни, ачасене юратни, мăшăра юратни... Хăçан та пулин çак туйăмсем пĕрле мĕнле хăватлă пулнине эпир туятпăрах,- теççĕ ыр кăмăллăх концертне лартакансем.

Вĕсем юрлакан тепĕр юрăри сăмахсемпе каласан, пирĕн пирĕштисем пире сыхлаççĕ, пире юрату тумламне парнелеççĕ. Пирĕн хамăра та юратма вĕренесчĕ, ыттисем çинчен кирлĕ-кирлĕ мара калаçас марччĕ. Юрату парнелесчĕ...

Концерт вĕçленчĕ. Чăннипех те, район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов палăртнă пек, кунта хушса калама та йывăр.

– Тавах Сире çак чун-чĕрене пырса тивекен тĕл пулушăн. Эсир пире парнеленĕ юрату тумламĕшĕн,- терĕ Юрий Александрович. Унтан çапла хушса хучĕ:

– Чăннипех те, пирĕн кулленхи пурнăçра та пĕр-пĕринпе çывăх пулма тăрăшмалла. Хамăра хамăр çак ыйтăва парсан та пăсмасть пуль: «Мĕншĕн эпир çак çĕр çинче? Ун пĕлтерĕшне туйса, хамăр хыççăн ырă йĕр хăварма тăрăшмалла».

Çавăнпа пĕрлех район пуçлăхĕ пĕр вăрттăнлăха уçса пачĕ:

– Ытти çулсенче çулталăк вĕçленес умĕн çитес çула мĕне халалланине пĕлтеретчĕ Николай Васильевич. 2006 çул умĕн çакăн пирки асăнмарĕ. Светлана Юрьевна, эсир ăс-хакăлпа чунлăха аталантарас ĕçе йĕркелесе ертсе пыни хăех Николай Васильевич çине Эсир витĕм кӳнине çирĕплетет. Тавах Сире,- терĕ Юрий Александрович, президент мăшăрне Светлана Юрьевнăна. Юрăççене вăл Муркаш тăрăхĕнче пулнине асилтерме "Муркаш районĕ: уявсем, йăла-йĕркесем" кĕнекене парнелерĕ.

Чăннипех те, ырă çынсем кĕрсен пӳлĕм те çуталать. Кашнин чун-чĕринче юратун пĕр тумламĕ те пулсан пултăрччĕ. Вара пӳлĕм çеç мар, пĕтĕм тĕнче çуталĕччĕ. Эппин, хамăртан килнине тăвасчĕ пирĕн, пĕр-пĕрне каçарма, юратма пĕлесчĕ. Ырă сунасчĕ пĕр-пĕрне.

**Л. ПАВЛОВА.**

# Çимĕк

Мăнкун иртсен çиччĕмĕш эрнере чăвашсем Çимĕк кунне уявлаççĕ. Вăл вилнĕ тăвансене, хурăнташсене асăнмалли кун. Христиансен Троица ятлă уявĕпе пĕр килет.

Çимĕк ыран тенĕ чухне хĕрарăмсем вăрмана кайса эмель курăкĕсемпе йывăç тураттисене пуçтарса килнĕ. Чӳрече умне, алăк, хапха патне тирсе тухнă. Ытларах пилеш тураттипе усă курнă. Мĕншĕн тесен ĕлĕкех çапла каланă: пилеш усал вăйсене сирсе ярать, пӳрт-çурт патĕнчен хăвалать тенĕ. Чăвашсем ку йăлана пăхăннине паян та курма пулать. Çимĕк кунĕсенче пилеш тураттисемпе илемлетнĕ ялти çуртсене асăрханах ĕнтĕ эсир.

Тĕрлĕ йывăçсен пуххинчен хатĕрленĕ милĕкпе чун каниччен çапăнса, эмел курăкĕсен шывĕпе тасалса çăвăннă хыççăн шапшур çĕнĕ кĕпе тăхăнса кĕтсе илеççĕ Çимĕк уявне чăвашсем. Вилнисене асăнмалли кунра юхтармалли икерчĕ, кукăль-пӳремеч тата ытти тутлă çимĕçсене пĕçерсе хатĕрлеççĕ. Килте ваттисене асăнсан, пурте (масар) çăва çине каяççĕ. Унта çитсен вил тăпри çумнерех çивитти сарса хурса, пĕрле илсе килнĕ çимĕçсене лартса тухаççĕ те пур тăвансенче вилнисене асăнса, хатĕрленĕ апат-çимĕçпе сăйлаççĕ.

## Тав çырăвĕ

### Чĕререн тав сире

Москакасси шкулĕн директорне часть командованийĕ сирĕн шкултан вĕренсе тухнă Сергей Александрович Терентьев сержантшăн пысăк тав сăмахĕ калать. С.А. Терентьев сержант таса чун-чĕреллĕ, ĕçе юратакан, пуçаруллă салтак. Ахальтен мар ĕнтĕ вăл командирсемпе юлташĕсем хушшинче авторитет çĕнсе илчĕ.

Сирĕн шкул малашне те çĕршывăн тивĕçлĕ хӳтĕлевçисене вĕрентсе кăларасса çирĕп шанса тăратпăр. Кулленхи ĕçпе эсир çĕршыв мăнаçлăхне тивĕçлĕ тӳпе хыватăр.

**М. ШЕПЕЛИН, управлени батарейин капитанĕ.**

## Тĕпелте

### Пулă шӳрпи

Пĕçернĕ чĕрĕ пулăран (уйрăмах çăрттанран) шурлăх шăрши ан кĕтĕр тесен, ăна малтан лайăх тăварланă сивĕ шывра питĕ тĕплĕ çумалла.

Треска шăрши пулла уксусра кăштах тытнипех çухалать.

Пулла уксуспа сăтăркаласа илсе кăштах вырттарсан, ăна хуппинчен шуратма çăмăл. Тата пӳрне вĕçĕсене тăвар çине пуçса илсен вăл алăра йăмпăлт-ямпăлт шукаламасть.

Ăшаланă пулă тутлă пултăр тесен малтан ăна кăштах сĕт янă савăтра тытмалла, ун хыççăн çăнăх çинче йăвалантарса илмелле, те вĕресе тăракан тип çу çине хурса шаритлемелле.

Ăшаланă чухне пулă вакланса-тĕпренсе ан пĕттĕр тесен, ăна тăвар сапса вунă-вун пилĕк минут вырттармалла. Çав хушăра тăвар пулă ăшне сăрхăнса кĕме ĕлкĕрет.

Савăт-сапаран, çĕçĕ-кашăкран пулă шăрши кĕрсе ан «тарăхтартăр» тесен, вĕсене уксуспа нӳрĕлентернĕ пĕр-пĕр пир татăкĕпе сăтăрса хумалла е супăньлесе сивĕ шывпа çумалла.

# Пĕлтерӳсем. Объявления

**В селе Моргауши на территории рынка открылся магазин с большим ассортиментом бытовой техники «ВАСИЛЕК». В магазине большой выбор светильников, люстр, сотовых телефонов. При покупке телефона вы можете здесь же подключиться на услуги: «Билайн», «Мегафон», «МТС», «Смартс» по различным тарифам. КРЕДИТ 0 % БЕЗ ПЕРВОНАЧАЛЬНОГО ВЗНОСА.**

**В магазине «Василек» подключение бесплатное и к тому же, каждому подключившемуся или купившему сотовый телефон, мы дарим подарок.**

**4-4.**

**Предприятие закупает натуральные волосы длиной более 25 см по высоким ценам. За косу от 40 см - модная стрижка и сотовый телефон в подарок. Прием волос только один день – 15 июня с 9 до 17 часов в парикмахерской Дома быта по адресу: 50 лет Октября, д. 4.**

**Куплю трех- или четырехкомнатную квартиру в с. Моргауши.**
**Телефон: 8-960-310-25-16.**

Администрация Кадикасинского сельского поселения Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка к распределению на правах аренды, для ведения крестьянско-фермерского хозяйства, из земель сельскохозяйственного назначения, без права строительства на нем, расположенного на территории Кадикасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики

| № п-п | Месторасположение земельного участка | Кадастровый номер участка | Целевое назначение | Площадь кв. м |
|---|---|---|---|---|
| 1. | Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение | 21:17:07 25 01:0648 | Для производства сельскохозяйственной продукции | 42641 |
| 2. | Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение | 21:17:07 25 01:0647 | Для производства сельскохозяйственной продукции | 45968 |

Заявления от граждан принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: дер. Кораккасы, ул. Новая, д. № 1, администрация Кадикасинского сельского поселения, с 8-00 до 17-00. Телефон для справок: 2-16-08, 35-2-71.

**Глава администрации Кадикасинского сельского поселения Моргаушского района Г.Г. ЛЕБЕДЕВ.**

«Моргаушсельхозхимия» чикĕллĕ яваплăхлă общество коллективĕ кунта агрономра ĕçленĕ

**Изосим Петрович**
**ПЕТРОВ**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки вĕсен çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

**Продается двухкомнатная квартира старой планировки в кирпичном здании по улице 50 лет Октября в с. Моргауши. Площадь 46 кв. м., 2 этаж.**
**Тел.: 8-927-854-29-97, 2-16-06.**

**Продается деревянный пятистенный дом на вывоз, автомобиль ВАЗ-2107 1994 года выпуска с газовым оборудованием. Обращаться по телефонам: 8-927-851-40-99 или 2-11-30 после19 часов.**

**Срочно продается однокомнатная квартира в г. Ядрине в районе маслосырзавода в трехэтажном кирпичном доме. 2-ой этаж, имеется подвал. Цена договорная.**
**Телефон: 8-917-666-13-22.**

**Продаю блоки керамзитобетонные 20х20х40, 12х20х40 (также и цветные), песок речной, гравмассу, цемент, шифер, рубероид. Доставка по Моргаушскому району бесплатно.**
**Требуется водитель на ГАЗ-53 самосвал. Обращаться по телефонам: 2-18-80, 8-903-379-16-62. Андрей.**

**2-2.**

**Продается трактор МТЗ-80 1987 г. в. и комбайн СК-5М «Нива» 1989 г. в.**
**Телефоны: 2-10-79, 33-2-48.**

**Куплю кирпичный дом с надворными постройками.**
**Телефон: 8-927-850-90-42.**

**1-2.**

**В сказочном красивом бору села Большое Карачкино Моргаушского района по улице Лесной продается терем со зрелым садом и надворными постройками.**
**Обращаться по телефонам: 2-18-01, 2-16-63, 8-845-377-35-83.**

**Хаçатăн çитес номерĕ июнĕн 16-мĕшĕнче тухать.**


У ВАС В ГОСТЯХ!

15-16 июня

Швейное предприятие
«ОБНОВА»
приглашает ВАС

На выставку-продажу
коллекции осень-зима 2006-2007.
Шубы натуральные,
пальто зимние, пальто демисезонные
производства ООО «ОБНОВА»
г. Новочебоксарск.

Цены от производителя!
Кредит за 15 минут!
(наличие паспорта)

Мы ждем ВАС: Дом Культуры
с 8.00 до 19.00

МЫ РАДЫ ВСТРЕЧЕ С ВАМИ





ГУП ЧР "Моргаушский издательский дом"
Моргаушская районная газета
"ÇĔНТЕРӲ ЯЛАВĔ"
УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики "Моргаушский издательский дом".
Директор-гл. редактор
А.И. ТИХОНОВ.

АДРЕС: 429530, Чувашская Республика,
село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36,
заместитель главного редактора - 2-12-82,
бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни,
социальной жизни - 2-12-82, сельского хозяйства - 2-11-38.
E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Печать офсетная,
объем 1,0 п. листа.
Тираж 3530.
Время подписания в печать в 17 час. 20 мин.,
подписано - в 17 час.
09.06.2006 г.
Заказ 1483
Дежурный по номеру
СУВОРОВА О.Ф.
ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.

Номер набран и сверстан в ГУП "Моргаушский издательский дом", отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.